Çур аки – 2008

# Ырăпа çеç палăрчĕç



Л. Пушкина повар тутлă апат тухăçлă ĕçшĕн паха пулнине ăнланать.

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Хир тăрăх малалла каятпăр. Председатель эрне каялла акнă «эльф» урпа пуссинче чарăнчĕ. Машинăран тухса тăпра сийне алăпа тĕкĕнтĕмĕр кăна, куç умне самай сăмсаланнă урпа пĕрчисем тухса выртрĕç.

– Агротехникăна пăхăнассинче вăхăтра акни пĕлтерĕшлĕ. Çурхи нӳрĕкпе туллин усă курассине хамăрăн тĕп тĕллев тесе шутлатпăр. Авă апрелĕн 16-мĕшĕнче акнă çурхи тулă хирне симĕс сăн кĕчĕ те, – малалла ăнлантарать çурхи ĕçсемпе кăсăкланнă май М. Шишокин.

Уй-хирте кĕрхисене апатлантарнă тата нӳрĕк тытнă çĕрте, çуртрисем акассипе 8-мĕш çур акине хутшăнакан Д. Быков (хастар çамрăк унта ДТ-75 тракторпа, хыççăн кăшман тата тырă акнă çĕрте МТЗ-82.1 тракторпа тăрăшулăх кăтартрĕ), А. Артемьев, В. Пушкин, акма çĕр хатĕрлессипе С. Наумов, А. Пушкин, В. Димитриев механизаторсем тăрăшулăхпа палăрнă. Хире тырă вăрлăхĕпе минераллă удобрени вăхăтра кăларса тăрассипе М. Иванов, В. Кузов, В. Пушкин çын куçĕнчен ӳкмен. Çур аки пĕччен тумалли ĕç мар, çакна куллен асра тытса мехпаркра вăй хунă юсавçă Н. Николаев та ырă сăмаха тивĕçлĕ. Тереçсене пулăшма Ситуккассинчен килнĕ 6 çынран тăракан бригада та пит хĕреттмен: хире вăрлăхпа минераллă удобрение тиесе ăсатассипе ĕçре кăлтăк туман. Б. Ивановпа, В. Димитриев акаçăсем те тусанлă ĕçрен пăрăнмарĕç.

– Ĕçе вăхăтра пурнăçлама пултарнинче мĕне тĕп вырăна хуратăр? – ыйтрăм хуçалăх ертӳçинчен. Хăй те çĕрне-кунне пĕлмесĕр хирте пулнăран, Михаил Николаевичăн хуравĕ те хатĕр:

– Çур аки çулталăк тăрантарать тенине асран кăларма сăр ĕçлерĕмĕр. Никам та ĕçрен пăрăнса юлас темерĕ. Хирте ĕçлекенсене асăнтăмăр та, вĕсене кунне икĕ хутчен вĕри апатпа тивĕçтернĕ Лидия Ивановна Пушкинана та паян кашни ĕçчен ырăпа асăнать, – пулчĕ хурав.



Б. Ивановпа В. Димитриев акаçăсем хăйсен тăрăшулăхĕпе ĕç хăвăртлăхне ӳстерчĕç кăна.



2006 çулта ЧР Президенчĕн стипендиачĕ пулнă С. Наумов ĕçре малтисен ретĕнче пулчĕ.

Кĕрхи тулă хирĕнчен пирĕн çăмăл автомашина тапранчĕ. Михаил Николаевичăн куçĕсем вара хиртен каймарĕç. Унăн сăмахĕнче сухаламан çĕрсен ыйтăвĕ малта пулни палăрчĕ. Тав Турра, кун пекки Тереçре çук, анчах кӳршĕ хуçалăхсенче вĕсем самай пулни çĕр ĕçне чунĕпе парăннă ертӳçĕне самантлăха та канăç памасть.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе

# *Вутра çунар мар, шывра путар мар*

Çуркунне-çулла кашни çыннăн юратнă вăхăчĕ шутланать пулĕ. Анчах та асăрханусăр пулсан çут çанталăкăн çак тапхăрĕ те палăрмаллах хура йĕр хăварать. Шăпах çанталăк шăрăх чухне пушар тухас, шыв çинче инкек пулас хăрушлăх ӳссе каять. Çавăнпа та çак кунсенче районти чрезвычайлă лару-тăрава асăрхаттарас тата пĕтерес, пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен комисси хăйĕн ларăвĕнче çуркуннехи-çуллахи тапхăрсенче пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес ыйтăва пăхса тухни ăнсăртран мар. Иртнĕ çул кăна районта пушар 54 хутчен тухрĕ. Вут-кăварта миллионшар тенкĕлĕх пурлăх пĕтрĕ. Пурлăх кăна-и? 9 çыннăн пурнăçĕ татăлчĕ. Çав шутран пĕр ача вилчĕ пушарта. Чĕрене ыраттармаллипех ыраттараççĕ çак пулăмсем.

Ку тĕслĕхсем пулнă-иртнĕ темелли çук. Кăçал та хăпмасть çак инкек пирĕн районтан. Çулталăк пуçланнăранпа ашкăннă 8 пушарта 2 çыннăн кун-çулĕ татăлчĕ те ĕнтĕ. Апла пулсан район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ-ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ, асăннă комисси председателĕ В.К. Ананьев ларура палăртнă пек, ыйтăва пăхса тухни кăна çителĕксĕр: пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес енĕпе конкретлă утăмсем тумалла. Хальлĕхе вара ку енĕпе татăклă утăмсем тунă тесех калама çук. Районти 21 ял хуçалăх предприятийĕнче ведомство пушар хуралĕ йĕркеленĕ пулсан, паян вĕсенчен çуррине яхăн çеç ĕçлеççĕ теме пулать. Муркаш районĕнчи 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн ертӳçи С.П. Митрофанов каланă тăрăх, вĕсенче нихăшĕнче те бензин кирлĕ чухлĕ çук. Ку пĕрре. Тепĕр енчен, паян çак 7 ведомство пушар хуралĕнче дежурство йĕркелеме çын çитмест.

Ял тăрăхĕсенче пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсем çине тимлĕх уйăрмаççĕ тесен тĕрĕсех пулмасть-ха. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.П. Мазиков каланă тăрăх, ял çыннисемпе пуçтарăнса каçхи хурал йĕркелемелли çинчен калаçса татăлнă. Оринин ял тăрăхĕнче пурăнакансене те пурнăç опычĕ тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем тутарттарчĕ. Иртнĕ çул кунта типĕ курăк çунтарнă чух вут-кăвар кăшт кăна ферма çурчĕ çине сиксе ӳкеймерĕ. Кăçал вара ферма çывăхĕнчи курăка пуçтарнă. Халăхпа çӳп-çапсене пуçтармалли пирки калаçнă, субботниксем ирттернĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.С. Суриков каланă тăрăх, майăн 1-мĕшĕнчен пуçласа ятарлă комисси çак пухура йышăннине мĕнле пурнăçланине тĕрĕслеме рейда тухать.

Паян ял тăрăхĕсенче пĕвесем патне пыракан çулсене тасатмалла. Унсăрăн инкекмĕн сиксе тухас пулсан (ун пекки ан пултăрччĕ), чавса çывăх та çыртма çук пулĕ. Ларура малтан аммиак цистерни пулнă савăтсене ялсенче шыв тултарса лартмалла тумалли пирки те сăмах пулчĕ.

–Туянăр, паратпăр, – хуçалăх ертӳçин çак сăмахĕсем вара тепĕр хут хуçалăх ертӳçисемпе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе пĕрле пĕр тĕллевлĕн ĕçлемелли çинчен калаççĕ. Пĕр вырăнти икĕ шайри ертӳçĕрен пĕри арманалла, тепри вăрманалла пăхсан, ырă улшăнусем пуласси пирки калама хĕн. Ларура пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе çине тăрса ĕçлемеллине палăртса хăварчĕç, çав шутран – ăнăçсăр çемьесемпе ĕçлемеллине те. Çакăн сăлтавĕ те ахаль мар. Пушарсен тĕрлĕ сăлтавĕсенчен ачасем шăрпăкпа айкашнипе, ӳсĕрле пирус туртнипе, ӳсĕрле электрообрудованипе усă курни час-час тĕл пулать.

Халĕ ларура пăхса тухнă тепĕр ыйтăва илер. Шыва кĕмелли тапхăрта юхан шывсенче, пĕвесем хĕрринче инкек ан пултăр тесен пур условисем туса çитеретпĕр-и? Иртнĕ çулхи инкексем пирĕн ку тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелли çинчен калаççĕ. Çанталăк ăшăтмассерен ашшĕ-амăшĕн чунĕ хăрама пуçланине камах-ха хирĕçлейĕ? Ларура хускатнă калаçу чуна лăплантармалласкер: шкулсем çумĕнчи лагерьсенче ачасене йĕркелесе шыва кĕме илсе каймалла. Кашни лагерьте ачасене шывра ишме вĕрентекен физрук е тренер пулмалла. Июнĕн 16 – июлĕн 16-мĕшĕсенче лагерьсенче, вĕрентӳ учрежденийĕсенче «Шыв çинчи хăрушсăрлăх» уйăхлăхне ирттермеллине палăртса хăварчĕç.

Çавăн пекех район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пай ертӳçи Н.П. Милютин ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене шыв çинчи хăрушсăрлăх ыйтăвне куçран вĕçертмелле маррине палăртсах ларĕ. 2008 çулхи шыва кĕмелли тапхăра шыв çинчи хăрушсăрлăхпа тивĕçтерес тĕллевпе нормативлă право акчĕсене хатĕрлесе йышăнмалла. Çынсем массăллăн шыва кĕмелли вырăнсене палăртмалла, вĕсенче çăлакансен посчĕсене йĕркелемелле. Шыва кĕме юраман вырăнсенче çакăн çинчен калакан паллăсене вырнаçтармалла. Майăн 10-мĕшĕччен район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пайне халăх массăллăн шыва кĕме палăртнă вырăнсене водолазсемпе тĕпчесе пĕве тĕпне тасаттарма заявкăсем тăратмалла.

Пĕтĕм хăрушсăрлăх мероприятийĕсене вăхăтра тата кирлĕ пек ирттерсен инкек пирĕн çума çулăхмĕ. Вара вутра та çунмăпăр, шывра та путмăпăр.

**Л. ПАВЛОВА.**

Паян – Раççей Федерацийĕнчи пушар хурал ĕçченĕсен кунĕ

# *«Инкексемпе пĕрле кĕрешмелле»*



Çапла пĕтĕмлетрĕç хăйсен сăмахне РФ пушар хурал ĕçченĕсен профессиллĕ уявĕ умĕн ирттернĕ калаçура районти патшалăх пушар надзорĕн пуçлăхĕпе И. СМИРНОВПА Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн ертӳçи С. МИТРОФАНОВ тата ВДПОн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн Муркашри пайĕн председателĕ В. ЯНДУШКИН.

**И. СМИРНОВ.** Республикăра та талăксерен вăтамран 6 пушар регистрациleççĕ. Вĕсенче кашни кун пĕр çын вилет. Куратпăр ĕнтĕ, çакнашкал лару-тăрура çăлавçă профессийĕн пĕлтерĕшĕ мала тухать.

Ытти енчен лăпкă пурăнакан районăмăрта пушар хăрушсăрлăхĕ тивĕçлĕ шайрах марха. Акă кăçал паянхи куна Муркаш Енре 8 пушар регистрацилерĕмĕр. Вĕсенче миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех 2 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Танлаштарма, иртнĕ çул ку кăтартусем 10 тата 3 пулнăччĕ. Каламалла, эпир пĕрле пулса кашни çынра ачаран пушар культурине аталантарсан кăна чылай инкексенчен пăрăнса иртме пулĕччĕ. Хальлĕхе эпир çакна пĕтĕмпех хатĕр теме çук-ха. Паян районта пушар чаçĕнчи пушар машинисене шутласан, вĕсем пĕтĕмпе 22 единица шутланаççĕ. Анчах вĕсенчен пурте ĕçе хатĕр-и? Паянхи куна районти 17 ял хуçалăх предприятийĕнче ведомствăлла пушар хуралĕсем пур: «Волга», «Моргаушская», «Лидер», «Герой» (икĕ машина), «Свобода», «Ударник» (икĕ машина), Ильич яч. хис., «Чемеево», «Передовик» (паян юсавра), «Оринино», Суворов яч. хис. Кунта манăн пушар хăрушсăрлăхĕ пирки çиччĕ вирçсе шутлакансем çинче уйрăммăн чарăнса тăрас килет. Тĕслĕх вырăнне Мăнхураçкасене илер-ха. Кунти пĕрлешӳллĕ хуçалăх юхăннă хыççăн юлнă икĕ пушар машининчен пĕр машина тăвасси пирки ял халăхĕ ĕçлет. Çакăнта вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. Мазиков тимленине палăртмалла. Çавăн пекех Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе С. Ермаковпа «Моргаушская» МСО ертӳçи А. Семенов «Новая Юнга» хуçалăх харпăрлăхĕнче пулнă пушар машинине строя тăратассипе килĕшсе ĕçленине ырламалла. Çак ĕçе ял çыннисем хăйсем çине илнине Турай ял тăрăхĕнчи Ойкас ялĕнче те куратпăр. Кунта халĕ пушар машинине юсассипе ĕçсем пыраççĕ.

Тепĕр ырă тĕслĕх пирки те каласа хăвармасăр майĕ çук. Катькас ял тăрăхĕнче унччен «Гигант», каярахпа «Колос» хуçалăх харпăрлăхĕнче пулнă пушар машинине стройра тытассипе юлашки çулсенче А. Портнов индивидуаллă предприниматель тăрăшулăх кăтартрĕ.

Çав вăхăтрах пушар хуралĕ çине çителĕксĕр тимлĕх уйăракансем те çук мар. Акă «Восток» хуçалăхра пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ юсавлă пушар машини депора тăлăххăн ларать.

Пурте куратпăр, пушар хăрушсăрлăхĕ хамăр алăра. Апла пулсан лăпкă пурнăçшăн пурсăмăр та пĕрле яваплă пулса тăратпăр. Çак ĕçрен айккинче тăманнисене Пушар хуралĕн кунĕпе саламлатăп. Сирĕн ĕç малашне татах та ăнăçуллăрах пуласса шанса тăратăп.

**С. МИТРОФАНОВ.** Пурнăçри, экономикăри йывăрлăхсем кашни утăмрах хăйсем çинчен систерсе тăраççĕ, çĕнĕ шухăшлав ыйтаççĕ, ку таранччен хи технологисене улăштарма сĕнеççĕ. Эпир те çул айккинче юлас мар тесе пуçсене усмастпăр, ĕçсене хăй еккипе ямастпăр, общество умĕнчи хамăр тивĕçе туллин пурнăçласа пыма тăрăшатпăр.

Пирĕн пушар чаçĕн 44 çулхи историйĕ пысăк та пуян. Вăл 1964 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче çырăнма пуçланă. Пушар хуралĕн пĕрремĕш пуçлăхĕ И.М. Казамбаев, малтанхи водительсем Ю.И. Тучевпа Н.Т. Тарасов тунă ĕçсем паян та упранаççĕ. Вĕсен ĕçне малалла тăснă вун-вун ĕçтешсем паян та манаймастпăр: А.П.Богданов, И.Б. Иванов, Н.П. Романов, Г.М. Пыркин, А.А. Архипов, В.Е. Павлов, Н.К. Чернов, М.М. Верендеев, В.В. Воробьев, Г.М. Леймов, В.А. Сорокин т.ыт.те. Вĕсен ĕçне паян çамрăксем малалла туртаççĕ. Коллективра Н.Т. Павлов водитель, караул пуçлăхĕ Г.Л. Пугачев, С.А. Кириллов пушарнăй, В.Григорьев, С. Шишкин, В.Кольцов водительсемпе часть пуçлăхĕн çумĕ А.Н. Куликов ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Пушар чаçĕнче нумай çул ĕçленисемпе вĕсен çывăх çыннисене те, паян çак службăна малалла тăсакансене те Раççей Пушар хуралĕн кунĕпе саламлатăп.

**В. ЯНДУШКИН.** Пирĕн тĕп тивĕç – пушар хăрушсăрлăхĕпе профилактика ирттересси. «Хĕрлĕ автанран» кирлĕ пек сыхлансан малалла пăхас килет, çĕнĕ тĕллевсемпе пурăнас шухăш çуралать. Анчах пурте пĕрешкел пăхаççĕ-и-ха пушар хăрушсăрлăхĕ çине? Ял тăрăхĕсене илес пулсан, пушар хăрушсăрлăхĕшĕн Мăн Сĕнтĕр, Турай, Юнкă, Чуманкасси, Муркаш ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пирĕнпе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ: пушар хăрушсăрлăхне тивĕçлĕ шайра тытма огнетушительсем туянма, пушар щичĕсене тулли тытма укçа-тенкĕ сахал мар уйăраççĕ. Пирĕнпе тачă ĕçленипех Турайĕнче те, Юнкăра та пушар машинисене строя тăратассипе юлашки ĕçсем пыраççĕ. Тивĕшри, Юнкăри, Нискассинчи, Çатракассинчи шкулсенче, «Мечта» (Мăн Сĕнтĕр), «Улыбка» (Ярославка), «Золушка» (Оринин) ача сачĕсенче çитĕнекен ăрăва пушар хăрушсăрлăх правилисене ачаран вĕрентессине мала хунине ырламалла кăна. Акă С. Михайлов ячĕллĕ Юнкăри вăтам шкулта Е. Яндушкина ертсе пыракан 3-мĕш классем пушар тематикипе ачасем умĕнче кăтартуллă тĕл пулусем тума агитбригада йĕркеленине те ырлатăп кăна. Çывхаракан çу кунĕсем умĕн ку питĕ пĕлтерĕшлĕ ĕç.

**А. ПЕТРОВ калаçнă.**

Ырă ĕçсен çулталăкĕ

# Пĕрле пуласчĕ

Çакнашкал пĕтĕмлетӳ патне пытăм эпĕ хама тахçантанпах канăçсăрлантаракан ыйтупа пĕрремĕш çул мар ĕçлесе çиччĕ виççе пăхнă хыççăн. Сăмахăм пушар хуралĕ пирки. Катькас ял тăрăхĕнче ведомствăлла пушар хуралĕ тытакан вырăнти пĕрлешӳллĕ хуçалăх юхăннă хыççăн ку тăрăхри пушар хăрушсăрлăхне хăй еккипе ярас мар тесе пушар машинине юсавлă тытассине хам çине илтĕм. Пĕччен çак ĕçе тытса пыма çăмăл маррине куратăп тата çакна ку тăрăхри ытти предприятисем те ăнланнине ĕненетĕп, анчах... Пушар машини инкек тухсан çеç кирлĕ пулнишĕн хĕвĕшнине курсан чун тăвăлать.

Анчах апла-и, капла-и, çапах пĕрре пуçăннă ĕçе пăрахма шутламастăп. Тунă пурлăха упрасси тата инкек тӳсекен çынна вăхăтра пулăшасси йывăрлăхсене парăннинчен сумлăрах курăнать. Паян эпĕ пушар машинине куллен рейса тухмалла юсавлă тытатăп, «бензин çук» тени манăн машинăсемшĕн мар. Тăвата водитель черетпе дежурствăра тăраççĕ. Вĕсем хăйсен тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçланăранах иртнĕ çул Шомикри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта пушар тухмалли çула вăхăтра пӳлтĕмĕр. Кăçал та Шомикре пурăнмалли çуртра пушар тухсан пирĕн пушар машини вăхăтра çитнипе çулăма айккалла сарăлма памарăмăр.

Пушар машини тытса тăма халĕ питĕ тăкаклă. 4 водителе ĕç укçи, ятарлă тумтир, машини валли бензин, запас пайсем кирлĕ. Паян çак тăкак йăлт майлах хам çинчен каять. Çакăнта ял тăрăхĕ, ял çыннисем пулăшсан аван пулмаллаччĕ. Çак пулăшу пулсан та эпĕ пуçăннă ĕçĕмрен ютшăнмасса шантаратăп. Пĕрле пуласчĕ çеç.

**А. ПОРТНОВ, предприниматель.**